Ача-пăча обществăлла организацийĕсем – 100 çулта

# Пур ĕçре те хастар пулмалла

Муркаш ялĕ варринче хавăслă кĕвĕ янăрать. Чакăр тĕслĕ çипуç тăхăннă ачасем район администрацийĕн çурчĕ умне васкаса утаççĕ. Кашни шкулăн хăйĕн уйăрса илмелли паллăсем – ялавран пуçласа пĕр пек тум таран...

Çапла хаваслă пуçланчĕ майăн 19-мĕшĕнче районти ача-пăча обществăлла организацийĕсен фестивалĕ. Салам сăмахĕсем хыççăн район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ача-пăча юхăмĕн истори страницисене аса илчĕ. Ачасем тимлесех итлерĕç. 1907 çулта Америкăра скаутсен юхăмĕ йĕркеленнĕ. Каярах, çак тĕслĕхе тĕпе хурса, пирĕн çĕршывра пионерсен организацийĕ вăл вăхăтри идеологие пăхăнса хăйĕн ĕçнехĕлне пуçлать. Паян вара, ача-пăча обществăлла организацийĕсем тĕрлĕ енлĕн ĕçлесе аталанса пыраççĕ.

Уявра халăх академикĕ И.Д. Вязов тата РСФСР тава тивĕçлĕ учителĕ М.Я. Гаврилов (вăрçă ветеранĕсем) пионер организацийĕнче иртнĕ ачалăх пирки интересленсех каласа пачĕç. Ачасене ĕçе вĕрентсе ӳстересси малта пулнă вăл вăхăтра. Çавăнпах пулĕ яваплăх туйăмĕ те пĕчĕкренпех çирĕп никĕсленнĕ. Шкулти обществăлла организацисен ертӳçисемпе шăпах çакăн пирки калаçрĕç те сумлă ватăсем. Пĕтĕмĕшле вара шкул ачисем пурĕ тăватă секцире тĕрĕслерĕç хăйсен ăс-тăнĕпе тавçăрулăхне. Вăл е ку çитменлĕхсене асăрхаса кирлĕ пĕтĕмлетӳсем турĕç.

Чи хумхантаракан самант вара район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов вĕренӳре «5» паллăсемпе ĕлкĕрсе пыракансене стипендисем пани пулчĕ. Ку, паллах, ыттисемшĕн те хавхалантаракан сăлтав. Шкул ачисен тĕп ĕçĕ те лайăх вĕренесси вĕт-ха...

11 сехет. Районти «Вĕрентӳ кунĕн» уявĕ пуçланчĕ. Фестивале хутшăнакансем район администрацийĕн ларусен залĕнче. Вĕсемпе пĕрлех – вĕренӳ çулĕнче иртнĕ тĕрлĕ олимпиадăсемпе ăмăртусен çĕнтерӳçисем. Раççей шайĕнчи право предмечĕпе иртнĕ олимпиада çĕнтерӳçисем иккĕн: Орининти вăтам шкулта вĕренекен Елена Алексеева тата Йӳçкассинчи вăтам шкул вĕренекенĕ Надежда Арсентьева. Республика шайĕнчи олимпидăсен çĕнтерӳçисем кăçалхи вĕренӳ çулĕнче пирĕн районтан 12 шкул ачи пулнă, Пĕтĕм Раççейри ăмăртусен çĕнтерӳçи пĕрре, республикăри тĕрлĕ ăмăртусенчен 19 ача призер пулса таврăннă.

Кунсăр пуçне районта иртнĕ мĕн пур олимпиадăсемпе ăмăртусенче мала тухнисене те вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ З.Ю. Дипломатова саламласа ăнăçусем сунчĕ. Вĕренӳ çулĕ вăхăтĕнче çакнашкал лайăх енпе палăрнисем пурте парнесене тивĕçрĕç.

Кунĕпех савăк лару-тăру хуçаланни, мал туртăмлă ачасене чыслани пурне те малаллахи утăмсене татах та çирĕпрех тума, ума лартнă тĕллевсене хастаррăн пурнăçлама çĕнĕ вăй хушрĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**



**Сăн ӳкерчĕкре: ачасен пичĕсем çинче – савăнăç.**

ГИБДД пĕлтерет

## «Асăрханăр – ачасем!»

Кашни çулах çак ятпа иртекен операци кăçал майăн 18-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 14-мĕшĕччен пырать. Ку çуллахи вăхăтра çул-йĕр çинчи инкексем ачасем хутшăннипе сахал мар пулнипе çыхăннă. Çак операци районта çеç мар, пĕтĕм çĕршывĕпех иртет.

Операци вăхăтĕнче районта тĕрлĕ профилактика мероприятийĕсем иртterme палăртнă. Вĕсен шутĕнче – районти патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн сотрудникĕсем ачасемпе тĕл пулса калаçусем ирттерни те. Ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕсенче те сотрудниксем çак темăпа калаçусем ирттерме палăртнă. Машинăсем ăшăнче ачасене лартса çӳремелли ятарлă креслосем пурри çине, хăрушсăрлăх ременĕсемпе кăкарăннине те тимлĕ тĕрĕслĕç.

Аслисен вара çул çинчи инкексенчен ачасене кашни кунах асăрхаттармалла – велосипедсемпе ярăнакан ачасене асфальт çулсем çинче час-часах курма май килет. Уйрăмах каç енне. Çул çитмен ачасемшĕн яваплă пулнине ашшĕ-амăшĕсен пĕр самантлăха та манмалла мар.

Çулсем çинче тимлĕ пулăр!

**А. ЩЕРБАКОВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн пропаганда пайĕн инспекторĕ.**

Милици хроникинчен

## «Ăста специалист»

Тяпакасси ялĕнче пурăнакан вăтам çулхи арçын саккуна пăхăнмасăр хăй килĕнче пĕчĕк калибрлă патронсем тата хăй тунă пăшал усранă. Пăшал ăсталама пуçĕ те, алли те аван ĕçленĕха. Малалла мĕн пуласси пирки вара çак «Калашников» пĕртте шухăшламан. Саккуна хирĕç кайнишĕн халĕ ответне тытмалла.

## Кустăрмасем комбайнран «тарнă»

Ленин ячĕпе хисепленекен хуçалăхри машинăпа трактор паркĕнчен «Енисей» комбайн подборщикĕн икĕ кустăрми те «кусса тарнă». Çакна тума вара таçти аякри çын мар, кашни кунах (тĕрĕсрех каласан – кашни каçах) кунта пулакан çын ăс çитернĕ. Хуçалăхрах ĕçлекен çынна айăпласси никамăн ăсне те пырса кĕмĕ-ха, тенĕ пулас вăл. Халĕ вара уголовнăй ĕç пуçарас ыйту тăрать.

## Пулă тытайман

Çуркунне пуçлансанах пулăçсем пĕве-юхан шывсем хĕрринчен уйрăлма та пĕлмеççĕ. Кăпас ялĕ çывăхĕнчи пĕвере те пĕр ватă арçын резина кимĕ çине ларсах пулă тытма шутланă. Шутлани вара пурнăçланман. Кимĕ ӳпĕннипе арçын шыва путнă.

Пулăçсен çыран хĕрринче вăлтапа ларнинче хăрушлăх сахалрах çав. Апла пулсан пурин те асăрханмалла.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

Редакци почтинчен

## Кăтартуллă уйрăм

Районти тĕп больницăн хирурги уйрăмне Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ Г.М. Огурцов ертсе пырать. Ывăнма пĕлмен ертӳçĕ вăл. Ăна ирпе те, каçпа та, канмалли кунсенче те чирлисен палатисенче куратăн.

Хуçи мĕнле – йышĕ те çапла, теççĕ. Чăн та. Акă И.М. Ярдыков, Ю.А. Кузнецов, Л.Н. Андреев врачсем операци пӳлĕмĕнче час-часах тăрмашаççĕ. Операци тунă хыççăн вара çынсене тимлĕн тĕрĕслесе тăраççĕ.

Г.М. Огурцов врачăн пултарулăхĕпе чăтăмлăхĕ уйрăмах тĕлĕнтерет. Миçе çĕр çынна операци туса вилĕмрен çăлса хăварман пулĕ вăл. Унăн алли çăмăл, теççĕ. Вăл операци тунă çынсем хăвăрт сывалаççĕ. Нумай йывăр операцисем тăвать ăста врач. Операци хыççăн сывалакан çынсен суранĕсене салтса çыхнă чухне те Огурцов вĕсемпе пĕрлех. Мĕнле сипленмеллине кăтартать, хăшпĕр сурансене çĕнĕрен операци тумаллине палăртать.

Хирурги уйрăмĕнчи медсестрасем те хăйсен ĕçне лайăх пĕлсе çитнĕ. И. Софронова аслă сестра, В. Сорокина, Л. Казакова, В. Санина ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Паллах, çынсене сиплес ĕçре вĕсене тутлă çитерни те, палатăсенче тасалăх пулни те пулăшать. Санитаркăсем тăрăшса ĕçленипе палатăсенче, кабинетсенче тирпейлĕ те таса. Н. Мироваева, С. Дмитриева, С. Николаева, Н. Петрова, Е. Вязова – çаксем тăрăшаççĕ те кунти тирпей-илемшĕн.

Ман шутпа хирурги уйрăмĕ ытти уйрăмсенчи шур халатлă ĕçченсемшĕн кăтартуллă уйрăм пулса тăрать. Кунта ĕçлекенсене ырлăх-сывлăх сунса малашне татах та лайăхрах ĕçлеме сĕнес килет.

**Павел ИВАНОВСКИЙ.**
Кĕртекасси ялĕ.

**ИП Ершов А.В. делает на заказ банные печи любой формы, а также гаражные, уличные ворота. Продает угольники, швеллера, профильные трубы, трубы на забор и ворота. Новый завоз. Емкости из нержавеющей стали, прицепы на мотоблоки, сетка рабица. Доставка. Обращаться по тел.: 8-919-655-21-51 (Моргауши, бывший плодокомбинат). 2-5.**

**ООО «Волжские ресурсы» и ИП Хунтерова Т.В. проводят опрос общественного мнения по вопросу предоставления территорий и акваторий в целях пользования объектами животного мира. Замечания и предложения просим направлять в адрес Госохотрыбслужбы: 428015, Чувашия, г. Чебоксары, Московский пр., д. 37. Тел.: 45-10-65.**

### Прогноз погоды с 23 по 30 мая

www.yandex.ru

| сб 23 | вс 24 | пн 25 | вт 26 | ср 27 | чт 28 | пт 29 | сб 30 |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| дождь | переменная облачность, дождь | переменная облачность, небольшой дождь | дождь, гроза | переменная облачность, небольшой дождь | переменная облачность | дождь | переменная облачность, дождь |
| +12 | +19 | +18 | +19 | +20 | +23 | +19 | +17 |
| +9 | +10 | +9 | +8 | +9 | +11 | +8 | +7 |

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97. 3-8.**

Пĕлтерӳсем. Объявления

**Продаю однокомнатную квартиру в кирпичном доме по ул. Гагарина в с. Моргауши. Площадь – 32,8 кв. м. Индивидуальное отопление, печь Baxi. Подвал - 10 кв. м. Телефон 62-2-82 (спросить Анатолия), сот. 8-961-343-07-48.**

**Продается ячмень. Доставка. Тел.: 8-919-679-96-97. 1-3.**







**Весенние скидки до 15 мая. Продажа пиломатериала, срубов любого размера, качества, хвоя, листва. Пиломатериал необрезной: хвоя 0,25 мм - 1 куб.м. - 6м по цене 3500 руб., свыше 5 куб.м. - 3200 руб., 0,50 мм - куб.м. - 6м. по цене 3700, свыше 5 куб.м. - 3500 руб., береза 0,50 мм - 1 куб.м. - 6м, 5м по цене 3000 руб.,обрезной пиломатериал, брус 150х150, 100х150 и т.д.; хвоя по цене 1 куб.м. - 5700 руб., свыше 5 куб.м. - 5500 руб.Любой размер бани, 3мх3м, сосна комплект 26000 руб и т.д., 1 куб.м. - сруб по цене 1000 руб. Доставка бесплатно. Тел.: 8-905-379-01-27, 8-960-099-17-57. 6-6.**




**Продается автомашина ВАЗ-2112 2004 года выпуска, цвет темно-зеленый. Тел.: 8-906-386-97-57.**




**Продаю недорого: дрова, ДВП, трубы для отопления, сани, телегу конную, пенопласт, железу оцинкованую, лестницу деревянную 6-метровую, перину, подушки. Тел.: 8-927-990-65-58.**

**БЛОКИ керамзитобетонные: 20х20х40, 10х20х40, 12х20х40, пропаренные, вибропрессованные. От производителя. ЦЕМЕНТ М-400, КОЛЬЦА колодезные, ТРУБА Д60 (под столбы). Доставка. Тел.: 8-927-848-78-16, 8-927-845-03-12. 8-9.**

**Продаются трактора ЮМЗ, ДТ-75 бульдозер, ЮМЗ с прицепом, плуг, культиватор, роторная косилка. Все в хорошем состоянии. Цены договорные. Тел.: 8-960-307-09-20.**

**МОЖНО КУПИТЬ: вагонку, двери, окна, пол, плинтус, наличник, перила, балясины, брусок, обрешетку (работаем на заказ). Все для бани. Адрес: с. Моргауши, ул. Гагарина, 2, рядом с налоговой. Тел.: 8-905-345-41-67. Андрей. 7-12.**

**Продаем доски хвойные любых размеров, обрезные и необрезные. А также срубы любых размеров. Цены ниже рыночных. Тел.: 8-903-379-62-17, 8-927-847-23-38. 1-5.**

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1,5 усл. печатных листа.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Шапошников В.Л.
Номер подписан 22.05.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3860.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.